К С(чув)
Ф33
4-37456

# …тий Федоров



Шупашкар
2000

Национальная библиотека ЧР
4-037456



ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КС(Чув)
Ф33

Георгий ФЕДОРОВ

# РОНДО

Ярăм-поэма

Шупашкар
2000

Обязат. экз.

УДК
ББК 84 Чув. 7
Ф-33

ПРОВЕРЕНО
20 ю

Федоров Г.И.
Ф-Рондо. Ярӑм-поэма. -
Шупашкар, «Чӑваш ен»
издательство, 2000.46 - с.

«Рондо» - чӑвашсен паллӑ тӗпчевҫин, прозаикӗн тата сӑвӑҫин ҫӗнӗ кӗнеки.
Автор кунта кун-ҫул философийӗн, ҫут ҫанталӑкӑн, ҫыннӑн кӗртен кӗре улшӑнса пыракан хевти-ӗренки пирки сӑмах тытать.

Ч-37456

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Автор проекта, предисловие и оформление Измаил Изембек.
Редактор Юрий Семендер.
Художник Владимир Трофимов.
Формат 70x90/1/32. Печ.л. 2.0
Тираж 100 экз.

Издательство «Чувашия», Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13

# КĔРХИ ХĔМ ЫТАРĔ

Георгий Иосифович Федоров – чăвашсен паллă тĕпчевçи, прозаикĕ, сăвăçи. Вăл 1942 çулта Чăваш Республикинчи Çĕмĕрле районĕнче Патаккасси ялĕнче çуралнă. Шупашкарта Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче ăс пухнă. Малтан учительте, каярахпа Ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче тăрăшнă, чăваш литературине тишкерсе палăрнă. Унăн хайлавĕсем хаçат-журналта нумай пичетленеççĕ. Витĕмлĕ тĕпчевсем туса мухтава тухнă çыравçă темиçе кĕнеке авторĕ. Вĕсен хушшинче «Хветĕр Уярăн тĕнчекурăмĕ», «Сăнарлă сăмах шыравĕ», «Чăваш прозин илемлĕх тĕнчи» тата ыттисем те. Филологи наукисен докторĕ, профессор. Халĕ Чăваш патшалăх университетĕнче стилистикăпа библиотека пĕлĕвĕн кафедра пуçлăхĕнче вăй хурать. Литература каçалăкне Георгий Федоров кĕçĕн çулсенчех тытнă, анчах тĕпчев мехелне асла хунăран, прозăпа поэзине пичете пама васкаман.

Хайлавсене шăнăрлакан тĕпрех туртăмсем: кун-çул философийĕ, çут çанталăкăн, çыннăн кĕртен кĕре улшăнса пыракан хевти-ĕренки. Лирики геройĕн чун пурнăçĕ,

кăмăлĕн екки. Тĕпрех мотивсем – кĕр сăнарĕ; çулталăк вĕçĕ шур хĕлпе, этем шăпи пин çуллăхпа тупăшни. Чун-чĕре драмипе ĕмĕт шанăçлăхĕ.

Сăввисенче Г.Федоров классикла формăсем патнелле туртăнни куç кĕрет. Ăна сонет, октава, рондо илентереççĕ, çапах та классикла формăсен кĕр туллилĕхĕ – кĕрпекĕ хăйне тивĕçлĕ вырăнне тупса пĕтереймест, тикĕс ритм сасартăк прозăна куçса каять. Сăвва вырнаçман шухăш лирикăран эпика ытамне тарасшăн ăнтăлать. Ку çакна пĕлтерет-тĕр: паянхи ахăр саманара классикла формăн пайти-тӳрри чакрĕ, вăхăт улшăнать, поэзи çĕнĕ çул, çĕнĕ форма шырать. «Рондо» кĕнеке те, тен, иртнĕ тапхăрпа ыранхи кун чикки пулĕ эппин, икĕ эпоха хушшинчи авăк. Поэзи ни прозăра, ни лирикăра пулнине ăнланни.

Рондо «французла» çавра тенине пĕлтерет. Поэзие вăл 16-мĕш ĕмĕрте, тĕпрен илсен, вунвиçĕ йĕркеллĕ, икĕ састашлă сăвă çаври пулса кĕнĕ. Рондо йĕрки тăрăх сăвăри пуçламăш сăмахсем сăвă варринче тата чи вĕçĕнче тепĕр хут тĕл пулаççĕ. Çавăн пекех сакăр, вун пилĕк тата çирĕм пилĕк йĕркеллĕ рондосем те пулаççĕ. Форма тĕлĕшĕнчи саккунĕ вĕсен пурин те пĕр пекех. Рондо жанрĕ Георгий Федорова

ĕмĕрсен сывлăшĕшĕн, жанрăн философилле содержанине калăплама кирлĕ. Ку вара ун поэзийĕн эпикăлăхне кăтартать.

Эпика тени те ăнсăртран мар. Кĕнекери сăвăсене уйрăмшар тăракан хайлавсем теме йывăр – вĕсен пĕр пĕтĕмлĕхне, пĕрлехи чун хавалне шăнăрлакан темиçе йĕр пур кунта: произведенисене поэма, эпос патнелле туртакан проза; геройăн кăмăл тăрăмне хытăрлакан кĕр сăнарĕ; çут çунталăк пайрăмĕсене кăмăл суранĕпе ырри тăвакан этем; малашлăхăн драмăллă, пĕрлех мал ĕмĕтлĕ юртти-чуппи т.ыт.те. Çавăнпа ку тĕртĕмсене, пĕрле илсе, поэма тет вĕсен авторĕ. Пурнăçăн ĕмĕрхи, пирĕнтен килмен саккунĕсем юмана та, çулçа та хăйле «çулпа уттараççĕ». Хире-хирĕçле енсем шав тапăçаççĕ ку сăвăсенче: яшлăхпа ватлăх, çутăпа тĕттĕм, кĕрпе çур, ĕмĕтпе трагеди. Çав тапăçу витĕр тухнă, чунне амантнăсипленĕ персонаж кĕрхи шуйханупа, куççулĕпе пуян. Вĕсем пулмасан кĕр кĕреки тулли пулаймĕччĕ унăн.

Георгий Федоров пултарулăхĕн çĕнĕ енне уçса паракан кĕнекене вулакан хапăл тăвасса шанас килет.

**Исмай ИСЕМПЕК**

## РОНДО

Пире çаратрĕ тĕссĕр самана.
Шопен рокпа ылмашнă тапхăр.
Тен, малалла кичемлĕн çеç пăхатпăр?
Синкерлĕх ритмĕ пăлхатать чуна.
Шыв майăн юхнă пек... Рокпа юхатпăр...
Пире çаратрĕ...

Пуш чĕрепе кăна çула тухатпăр.
Ӳкĕнĕçре хавал хевти пухатпăр.
Рок, пилсĕррĕн килсе, куллен-кунах
Пире çаратрĕ.

Иртни каллех таса вăй-хал сунать.
Мĕн-ма ăна çине тăрсах манатпăр?
Малашлăха тĕссĕрлĕхпе çыхатпăр.
Ырри вара пĕр кăлăхран çунать.
Сив тапхăр, ырă кăмăла тухатнăн, —
Пире çаратрĕ.

**1995**

* * *

Яш вёренелёх. Пёчёк сцена.
Кив паркăн ăш-чикне паян,
Нихçан чĕлхесĕрленмĕп, тенĕн
Хастарлăн пăлхатать баян.
Вĕçсе каяс пек фортепьяно
Нихçан пулман çĕкленӳпе.
Пин-пин ахах-асам туяннăн
Çиçет те йăлтăрать тӳпе.
Çилпе, ав, паркăн ешĕл чунĕ
Ăш пиллĕн хускалса илет.
Хĕвеллĕ, вăй питти — çу кунĕ!
Татах, татах юрлас килет.
Асамлăх анинче тăратăп:
Шур гамма шуххăн алхасать.
Çĕршер çынра тапать эстрадăн
Чун варкăшĕ, чупать-кусать.
Анчах халь çеç вăл баллюстрада
Килпетлĕ, шурă та таса.
Халь çеç эс савнăçлăн тăратăн
Хаваслă юрă юрласа.
Кĕç вăхăт çитĕ — карчăк пулăн.
Çухалĕ нар вăййи питрен.
Пĕчченçĕ, тăлăха эс юлăн.
Иртни — çухалĕ инçетре.
Пушанĕ залĕ çак театрăн,
Çын кĕмĕ-тухмĕ алăкран.

Кичемлĕ тунсăхра эс аптрăн
Ырра ĕненĕн — кăлăхран.
Çапла вăл. Тĕпренет шур мрамор.
Шур клавиш чунĕ урмăшать...
Тепле тата пулас-ха хамăр,
Кунçул кӳрсессĕн чĕр нуша.
...Анчах та ватлăху çитмесĕр
Пулас кунна ан пĕлсемех.
Ан пĕлсемех...

— Ара, ĕнер кăна йăлкăш кунччĕ вĕт! Каçхи тӳпе ытармиччĕ, хĕлхемленсе тăратчĕ. Çĕр сасăллă шавччĕ хăлхара /кĕтӳ анни, ачасем шавлани, хĕрсем юрлани, яшăсем ахăлтатни.../, пĕр хаваллă кĕвĕ пулса, çĕнтерӳллĕн янăратчĕ вăл манра. Вуншар çулсем хушши. Халь ăçта кайса кĕчĕ çав пурĕ йăлт! Хăлхари кĕмсĕр-кĕмсĕр те, шăнкăр-шăнкăр та йăмрĕ.

...Мĕнпурĕ — кашниех — чĕмсĕр: стена тăрăх хатарлăн шăвакан мĕлкесем те, сивĕ çутă пӳлĕмре хавассăр кĕмĕлленсе тăни те, çурт умĕнчи йывăçсем ыйхисем тăранманлăн карăнкалани те... Тĕлĕк иккен. Вăранса каятăп та — ют халлă уйăх ман ыйха тимлĕн, сăхланчăк кăмăлпа сыхланине туятăп.

...Элле, ҫавӑ илсе ҫитерчӗ-ши вара мана вӑйпитти ҫу кунӗнчен ҫак вӗҫсӗр-хӗрсӗр уҫлӑх арки ҫине? Пӗр самантлӑх ырӑ авӑкран — чиксӗр сивӗлӗхе?.. Ах турӑ, тӗпренет-ҫке мрамор, шур клавиш чунӗ урмӑшать.

**1983**

* * *

Йӗретпӗр.
Лӑшсӑр ӗсӗклетпӗр.
Савманлӑхра,
Шанманлӑхра — ҫӳретпӗр.
Халь пурӑнни вӑл —
Пурнӑҫ та мар пек,
Ыранхиех пулассӑн чӑн кӗрпек,
Ялан ыранхине
Кӗтетпӗр...
Йӑлтах — суя.
Эрешлӗ чӗнтӗр пек...

Ун чухне те садри акаци витӗр эрешленсе, ҫурхах чӗнтӗр пек тӗрӗленсе ӳкнӗччӗ урайне уйӑх ҫути. Халӗ те ҫав ӳкерчӗкех ман пӳлӗмре. Анчах ҫырӑнман сӑввӑм ҫырӑнман халлӗнех юлчӗ: кӑмӑл ӳкӗте кӗмерӗ, чун вырнаҫмарӗ. Тен, иртнӗ сӑна,

иртнĕ кăмăла ăшра усрас та мар-и? Паянхи кун паянхи савăнăç-пăшăрханупах пурăнас? Е, тен, ялан ырана кĕтни те ĕнере савниех вăл?

Кам калĕ? Кам хуравлĕ?

* * *

Парка юман кĕçех шаплатĕ, ўкĕ —
Çут тĕнчере çук нимĕн те çĕнни.
Сунарçăн туллиех çĕмрен йĕнни,
Çавна киссе, тен, кăшкăрать ват ўхĕ?
Пурах-мĕн — тĕлĕнтермĕш — унăн терчĕ;
Ачаш хунав, ăш кун екки кайсан,
Çут ĕмĕтри малашлăха туйса,
Хĕрў хавал хывмашкăн хавхаланчĕ.
Умра тапать пуласлăхăн канонĕ,
Пĕртен-пĕр форма шыракан чĕлхи.
Ĕнерхинчен расна — паян ĕлки.
Çут тĕнчере мĕн пурĕ — йăлт вăл çĕнĕ.
Ах тур! Ялан çакна пĕле тăркач,
Асап ытамĕнчех çўреп ир-кас.

Çу каçипе асапланса ларчĕ улмуççи. Йăтăнса пулнă çимĕçне йывăрпа çĕклесе, кĕр килессе кĕтсе. ...Хăçан та пулин тупатăмсене çăмăллăн ухса илме пулĕйин, канăпин, тетчĕ пулĕ...

Кĕр çитрĕ. Улмине те пуçтарчĕç

йывăç çинчен. Хăраххăн, тăлăххăн юлнă улми те ӳкрĕ татăлса, юлашки хур кайăк кăнтăра ăсаннăн.

Анчах мĕншĕн тунсăх пусрĕ çав улмуççие?! Кĕçех хĕллехи çанталăк кĕрпеллĕ юрпа чăхăнтарма хатĕрленннине вăл мĕншĕн вырăна хумарĕ? Каллех çурхи аслати тӳпе тăрăх çаруран пуçтахланса чупнине асне илчĕ. Аслати улмуççин хӳтсĕрлĕхĕнчен кĕмсĕртетсе кулнине кĕтме хатарланчĕ.

Çурхи, шараксăр сивĕ ун чечекне суккăр йӳтĕмпе шăнтса амантасса ĕненмерĕ апла улмуççи?..

**1994**

* * *

Кĕр вăрманне çитсе кĕретĕп:
Иртен кунсем — вĕтхӳ, вĕтхӳ.
Сип-сивĕ каç.
Чунпа йĕретĕп.
Пĕр тăтăш — йăсăл-йăс. Йĕпхӳ.
Пурнас килетчĕ ман хаваллăн.
Анчах шăпа асап кӳрет.
Телейĕм пулчĕ-тĕр юлхавлă —
Ăçта кăна-ши вăл çӳрет?
Кĕрхи вăрман. Юманлăх шавлăн

Пуçне уха-уха йĕрет.
Пурнас килетчĕ ман хĕрхӳсĕр.
Анчах та вĕçсĕр çухату
Кунçул сĕнет-çке хĕрхенӳсĕр.
Кӳрет пĕр лăшсăр ырату.
Тĕнче ман тĕллĕн —
Пулчĕ хĕсĕр,
Манпа пулмарĕ вăл тату.
Тен, ăсăмпа-ши катăк эпĕ?!
Ырри калать квасак тути.
Яш ĕмĕтсен сăвапĕ-шепĕ
Пулмарĕ пурнăçăм çути.
Аманнă кăмăл ипĕ-сипĕ —
Кашлать чакан пек армути.
Чунпа, тен, кăйттăрах эп пултăм?!
Кĕр вăрманне çӳре-çӳре,
Хамран хамах тискеррĕн култăм,
Йăшкатăр тенĕ пек чĕре.
Ӳкет сар çулçă, тимсĕр ылтăн —
Çĕре ӳкет йĕре-йĕре.

— — — — — — — — — — — — — — — — — —

Кĕр вăрманĕ шавлать кичемле.
Иртнĕ кунăм чуна тĕттĕмлет.
Пурăнма пĕлеймен этемле.
Пурăнма пуçламан пек темле.

...Çутçанталăкри авăкран авăка çӳрет

кĕр-çур нуши. Шав малалла. Çур килсен — çурăлать папка, сарăлать çулçă, хастарланать ешĕл шав... Кĕр тăманĕ çулçă кăмăлне, йывăç ĕмĕтне уямасть: ешĕле типĕтет, чĕррине çĕртет, яшшине хăртать.

...Кун-çулран кун-çула çӳрет этем шăпи. Шав малалла. Кĕр çилĕ пек тустарать ĕмĕтсене, ватлăхри ăссăрлăха: эпир пурăннă кунсене тăман милĕкĕпе /урам шăлакан пек/ хӳтерет, пĕр çĕре пухать те çунтарать — тĕссĕрленме, çĕтме, манăçма... Квасаклă ăнланманлăх, хĕрхӳ, вĕтхӳ ӳпкевпе тĕлĕнӳ юлать ăшра: пурăнма пĕлеймен этемле, пурăнма пуçламан пек темле.

... Анчах кăмăл хускалать те — татах çĕн юрă юрланать-çке?! Çур кунĕ килсен — татах сарăлать çулçă. Яшăсем тĕл пулсан — татах тĕвĕленет юрату! Куç çуллĕ, тилмĕрсе каçару ыйтниллĕ ырату...

**1993**

* * *

Хитре кăвайт çунать сӳнме, сӳнме,
Юман патварĕ-çирĕппи — тӳнме,
Шăтать чĕр курăк шăрăхпа ĕнме...
Пĕлмест никам та вилĕме çĕнме.

Тепле тискер хурах та — кĕҫ кăнать,
Хитре кăна хуҫалăх юхăнать.
Курсамччĕ ĕнтĕ — ҫăлтăр тăкăнать,
Тăват уралла ут та такăнать.
Эппин мĕн-ма пурнатпăр-ши, чăнах,
Самантсерен сивве вăрса чуна?
Мĕн пурăнни — пĕр авăклăх кăна.
Кунта эпир — мĕн пурĕ — йăлт хăна.
Ҫут тĕнчере пурри — йăлтах —
Типет, ҫĕрет, сӳнет, пĕтет...
Анчах тĕнче...
Тĕнче — мĕне кĕтет?
Кун-ҫул ытарĕн ҫăмхине сӳтет,
Сӳтет те ҫăмхалать...
Мĕн-ма, чăнах?!

**1992**

Ҫурхи кунсем килет те — ҫурăлать папка.
Ҫемье чăмăртанать те — ухăнать сăпка.
Кив ҫапă вăй парсан, кăвайт ҫунать,
Йĕкел ӳксессĕн, ҫĕн раща хунать.
Шăтсан чĕр курăк, тĕпренет гранит пек чул,
Хирте, хĕвел вăйне пухса, ӳсет тыр-пул.
Хавалсăр йывăҫ майĕпен типет,
Хĕвел ăна сунмасть текех сипет.

Хӑрать çеçке — вӑхӑчӗпе чечек шӑтма.
Каç сӗмӗсем килет — ыран хӗвел тухма.
Пӗтмесӗр амӑш — сарӑ хӗр пӗтмест,
Яш çын тӗнче вӗçленессе кӗтмест.
Çӗнни ялан малашлӑхпа кӗрет чӗрре.
Пӗлеп: ӳсес кун-çул пӗрре кӑна. Пӗрре.
Çут тӗнчере çук ним те вӗççӗрри.
Ӳсни — хӑрать, каллех шӑтать чӗрри...
Анчах тӗнче...
Тӗнче мӗне кӗтет?
Кун-çул ытарӗн çӑмхине сӳтет,
Сӳтет те çӑмхалать..
Мӗн-ма? Мӗн-ма?..

Чим-ха, çамрӑк та парка ӑвӑссем хаваслӑн шӗпӗлтетсе ларнӑ чух, инçет пуйӑссем çурхи каç шӑплӑхне хускатса чӗнӳллӗн кӑшкӑртнӑ чух, ара çитнӗ çамрӑксем çӗр çӗмӗрсе вӑйӑра ташланӑ чух — шӑпа çинчен калаçни кирлӗ-ши?.. Йӗмелӗх сӑлтавӗ ыран килӗ. Савӑнмалӑх сӑлтав — паян пур: вӑя кӗрекен ӳсӗм таппи. Çав мар-ши пурнӑçӑн тивлечӗ?! ... Анчах çут тӗнчере çук нимӗн те çӗнни. Вӗççӗрри...

**1992**

* * *

Мĕн-ма çу варринче çак çулçă
Сархайнă?
Ӳкнĕ татăлса?
Ăш çил йĕрет халь хурланса...
Вăл маншăн кĕр хыпарĕ пулчĕ.
Хĕрхӳн те теветкеллĕн кулчĕ.
Хурлантăм эпĕ, кăмăл юлчĕ.
Çапла янрать пĕчченçĕ нота.
Симфони хывнасса кĕтсе,
Самантлăха кăна килсе...
Чуна яш Моцарт шуххăн кĕчĕ.
Куççулĕсĕр — Бетховен йĕчĕ —
Кĕтет кĕр çумăрне çĕр пичĕ.
Çут тĕнчене мĕн-ма эп килнĕ?..
Пĕр авăклăх çунма. Сӳнме.
Пуласлăха кĕтме. Чĕнме.

...Пĕр-пĕринпе çуммăн, сăпайлă ушкăнпа ӳссе ларнă вун-вуник вĕрене кашни кĕрех çутă сарă тĕс сапатчĕ, йĕпеллĕсапаллă, сивлек кĕр кунĕнче йăлтăр çутăпа илĕртетчĕ, тем пек тискер кунсене те сăн кĕртетчĕ. Чун хистемĕш кĕвĕ итленĕн уçăлатчĕ вара кăмăл, чĕре хавасрах тапма тытăнатчĕ.

...Паян çук ĕнтĕ çав вĕренесем — йăлт

каснă, вутта вакласа çунтарнă... Анчах кă-мака ăшши мар, кĕрхи сапăр çутă ăшăтать кăмăла, асран тухми пурăнать чунра...

**1993**

* * *

Пĕлĕтсем... Хура та тĕксĕм.
Сивĕ каç — умри малаш.
Кантăкран, чуна пĕр йĕксĕк
Йĕкĕлтенĕн, çил шаккать.
Демонла вăйсем çӳреççĕ,
Мцыри пек, хавал тупса.
Сивĕ куççульпе йĕреççĕ
Пĕлĕтсем. Кичем. Кăра.
Аслатиллĕ çумăр. Шавлăн,
Çурхи кунăн таппинче
Килес çук кĕр кунĕ тавлăн
Ахăрать те туллашать.
Туллашать
Ыран хĕвеллĕ
Тапхăр килессе пĕлсе.
Гени çулĕ — ик тӳпеллĕ,
Икĕ полюслă тĕнче.
Лермонтов, пĕчченçĕ гени,
Тăлăхла, çу варринче,
Сарă çулçă, калăн, ӳкнĕн,

4-37456
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Татăлса йĕрет манра.
Татăлса йĕрет те чунĕ
Уçăлса кайсан, каллех,
Çĕн гармони тупнăн, кунĕ
Ун хĕвеллĕ те хитре.
Кĕç каллех — хура та тĕксĕм.
Сивĕ каç — умри малаш.
Кантăкран, чуна пĕр йĕксĕк
Йĕкĕлтенĕн, çил шаккать...

Рояль умне лартăн эс, хура-шурă клавишсем çийĕн аллусем чарлан çуначĕсем пек вăшăлтатса иртрĕç. Çăмăл та вăрăм пӳрнӳсем, сасă чечекĕсем çийĕн вĕçекен лĕпĕшсем, майĕпен çепĕç хум çуратрĕç. Пăшăл-пăшăл вăшăлтату пĕчĕккĕн çил шавне куçрĕ, уçă кантăкран пӳлĕме асла-тиллĕ тăвăл кĕчĕ. ...Аккорд çумне тăвăллă аккорд хушăнчĕ, тĕттĕм сада тухса йывăççене тустарчĕ, çумăр шавĕпеле пĕрлешсе...

**1992**

* * *

Калас сăмахăм пурччĕ — калаймарăм.
Сана чăрмантармашкăн хăяймарăм.
Пĕрре, тен, калăп теттĕм-çке, чăнах, —

Чуна вырнаҫмалли хитре сӑмах.
Юрлас тесеттӗм юрӑ — юрлаймарӑм.
Савас тесе пурнаттӑм — саваймарӑм.
Санпа пӗрле, ак, юрлӑпин юрра...
Шанса пурнаттӑм кӑлӑхран ырра.

...Упӑшку вара сан — телейрен ырнӑши? Мӑшӑрланни виҫ кун иртмен — сӑмахне пулчӗ-пулмарӗ перкелет, шӑхӑра-шӑхӑра пуҫтах юрӑсем юрлать. Сана иментерет, питне хӗретет... Хӑять-ҫке, эпӗ вара, ак...
Калас сӑмахӑм пурччӗ — калаймарӑм.
Юрлас тесеттӗм юрӑ — юрлаймарӑм.
Савас тесе пурнаттӑм — саваймарӑм.
Хӑйса... Сан кӑмӑлна эп... тупаймарӑм.

...Анас текен хӗвел тӳпенелле кӑварлӑ юпасем тӑрататать, телей ҫурчӗ лартаслӑн. Анӑҫ самантлӑха хӗп-хӗрлӗн ялкӑшса ҫунать. Ҫутӑ юписем майӗпен хӑмӑрланаҫҫӗ, анӑҫа кӗлпе витеҫҫӗ.

**1993**

* * *

Вут — чӗлхеленмӗ вӑр-вар.
Ҫулӑм тӗрмийӗ — кӑвар.
Хупӑнчӗ —
Манӑн ҫӑвар...
Кун-ҫул тӑманӗ ахӑрашнӑ чух,

шăнса ĕнтĕркесен йăлтах, —
Пĕрре çеç мар-çке, тăтăш,
Йĕкĕлтешӳ, сивĕ кулă хутăш,
ман кăвайта пăлхатрăн эс.
Пехетсĕрлентĕн.
Ыйтрăн çĕн юр-вар,
Çисе тăрантăн.
Ăшăнтăн.
Вара каллех —
Тухса ăсантăн хăвăн çулупа...
Тек чĕлхеленмĕп вăр-вар.
Кăмăл тĕрми халь — кăвар.
Хупăнчĕ манăн —
Çăвар.

...Асту-ха: йĕкĕлтешме те, ӳпкелешме те пĕлеттĕн. Çурхи уявлă садра ман алла вăрттăн сĕртĕнеттĕн, астарса, чăнласах вăтаннăн хĕрелеттĕн. Кĕр çитрĕ те пит çинчи суя именчĕк палли çурхах пĕркенчĕк пек сĕвĕнсе ӳкрĕ. Çу кунĕнчи кĕреш кăмăла упăшкупа ман хушăра пайлама ăшталанни сĕврĕлсе пĕтрĕ.

...Пулать хăш чух — вăхăта кĕтмесĕр писнĕ чие çырли çулçăсем хушшинче кĕвелнĕ юн чăмăркки пек курăнать. Вăхăтсăр çитнĕ кĕр синкерлĕ пуласса сис-

терсе йӑлтӑртататать вӑл хӗвел ҫинче.

...Тек чӗлхеленмӗп вӑр-вар.

**1993**

* * *

Паян ман пӳлӗм — хам пекех хавассӑр.
Ҫӑралнӑ тунсӑх тулчӗ сӑрхӑнса.
Рояль шута кайса ларать пӗр сассӑр.
Сӑмаххӑрсем...
Эсир хӑйса каласссӑр...
Кӗлленчӗҫ-ши?..
Хаваслӑхсӑр ҫунса.
Кӗлленчӗҫ те-тӗр ҫав.
Исленчӗҫ
Шелсӗр ҫумӑр айӗнче.

...Тулта сив ҫумӑр хашлатать, ҫил ассӑн сывлать. Хура каҫ сӗмӗ хунар ҫутинче — ни вӗҫнӗ, ни вӗҫмен кайӑк пек хӑлаҫланать, чӳрече умӗнче ӗмӗлтетет. Умри малашлӑха хупласшӑн-ши вара хӑй кӳлепипе?

...Тӳпене уйӑх хӑпарать, ҫурма вилӗ тӗс ман пӳлӗме сӑрхӑнать. Ҫил чарӑнать, чӳрече умӗнчи йывӑҫ инкек палли пек хытса тӑрать.

...Рояль шута кайса ларать пӗр сассӑр.

**1993**

# ВИÇШЕР ЙĔРКЕН

* * *

...Тухать пуль ĕнтĕ мĕскĕнĕн кĕç чунĕ.
Ах! Кам вăл — чарлана персе амантнă?!
Асфальт çинче — ун кăшкăру пек юнĕ...

Тĕреклĕ те вăй питти çу кунĕ чараксăр шăрăхра домнăри тимĕр кăмрăкĕ пек шăранать, халь-халь çĕр пичĕ çине юхса сарăлассăн. Нимĕнпе те, ниçта та хăтăлма май çук пăчă — хĕвел те хăмăрланса, тусăнса ларнăн туйăнать çав вĕрирен.

...Малтанлăха çеç кăмăллăн курăнакан мансарда хĕрсе çитнĕ сывлăшпа чыхăнать, яриех уçă чӳречепе алăкран пĕр лăм çил татки кĕмест...

**1968**

* * *

...Çунмаççĕ çăлтăрсем. Йăлтах суя вăл.
Пас сăрнă ĕмĕрсен ытамĕнче —
Çиçеççĕ сив мăнаçлă хĕмпелен...

Пулин, ара. Ан тив, каç пулттипе çут çăлтăрсем кӳлĕре пулăсемпе выляччăр; ан

тив, шыва ӳкнӗ йӑмра мӗлкисем ҫӗрӗпех пӑшӑл пӑтти пӗҫерччӗр; ан тив, хушӑран пулӑ иртнипе, шыв хумӗсем ҫӗмрен пек шуххӑн та ытарлӑн йӑлтӑрса илччӗр... Ан тив. Ку вӑл — пурӗпӗрех — пӗр авӑклӑх кӑна.

**1969**

* * *

Эп уҫлӑха кӗрсе курасшӑн пултӑм
Чунри вута сӳнеслӗхрен ҫӑлма,
Вӗҫсӗрлӗхе асра тытса юлма.

Эп куртӑм, типсе кушӑрханӑ ҫулҫӑ чие ҫинче хӗл каҫма юлнӑ. Хӗл каҫипе сив ҫулсемпе туллашнӑ, кӗрпеллӗ юрпа — чыхӑна-чыхӑна тавлашнӑ, тӑман шӑртне ҫӗнтерме пултарнӑ. «Мӗн ятне?« — ыйтасшӑн пултӑм унран, ҫурхи кун курсан.

Вӑл, татӑлса, нӳрлӗ ҫӗр ҫине ӳкнине асӑрхасан. Ман кӑмӑла вырӑна хумарӗ ҫулҫӑ — ҫурхи чарусӑр ҫумӑрпа исленчӗ, татӑлса-ҫӗтӗлсе пӗтрӗ. Вӗҫсӗрлӗхе асра тытма.

**1972**

* * *

Пуласлăха, тен, кăлăхран хăтларăм
Чуна-юна хускатнă кĕвĕре?
Нейгауз, Рихтер кăмăлне тăнларăм.
Умри çула, тен, кăлăхран хăтларăм?..
Тупса пулайĕ-ши çул хыттине?..
Никам та ним те каламасть, чĕнмест.
Çӳл тӳпери пĕр çăлтăр çеç — Сӳнмест.
Çунать
Кĕрхи сив кӳкĕрт хĕмĕпе.
Шăпам унпа çеç ларĕ-ши тĕпе?!.

— Эп уçлăх сăрине ĕçетĕп Алтăр-çăлтăртан, — тенĕччĕ пĕр сăвăç. Пас сăрнă инçете чунĕ-юнĕпе иленнĕскер. Мана вара Муза унашкал телей сунмарĕ: тарса çӳрерĕ анкарти хыççин, шапăл-шапăл туса вĕçсе кайрĕ умран. Хур кайăк çулĕпе ăсанчĕ, илем тупма унсăрах ăсталанса çитнĕ сăвăç патне тăчĕ черете. Кăпăш пĕлĕт пулса хăпарчĕ тӳпене, Çăлтăр кĕрчĕсене сирсе малашлăха кайма. Çунат çапса вăл вĕçрĕ, уçлăх симпылне ĕçрĕ...

Ах тур, тупса пулайĕ-ши çул хыттине?!.

**1994**

* * *

Анлăлăх.
Çăлтăр тан тапнă
Мăн усăлăх —
Шăнтать чĕрене.
Сĕмлĕх —
Сив кĕмĕл хĕм сапнă.
Пас сăрнă çӳлти тӳпене.
Хĕлĕх хистев.
Çӳлтен вăл —
Çĕре карăнать.
Пурĕпĕр —
Çурçĕр-и, кăнтăр...
Тĕнче —
Кĕвĕре çаврăнать.
Купăс`янрать:
Хĕлтĕр-хĕлтĕр
Иртнин-пулассин чĕринче.
Уйăх çути
Чĕлтĕр-чĕлтĕр хĕмленчĕ
Сукмакăм çинче.
Шухăшлăн,
Тавлăн çӳретĕп
Метафорăсен хирĕнче.
Ватлăх кĕрне эп —
Кĕретĕп.

Йăлтах —
Кĕмĕл тытнă тĕнче.
Сулхăн та тунсăх вăл сыпнă
Лăпкамăш,
Хитре çав тĕнче.
Çулăмсăр,
Сапăр вут хыпнă тӳпен
Сив иленĕçĕнче.
Сăнлăх, сăнарлăх сипечĕ.
Шекспир е Петрарка ани.
Çăлтăрлă ирĕк инçечĕ —
Вĕсем ăсласа калаçни.
Шухăш-асап тараватлăн
Сăнлăх
Сĕнмерĕ мана.
Пурĕпĕр, — яшлăх-и, ватлăх, —
Ах,
Ун —
Астарасчĕ кăна.
Кунăн та çулăн
Килпечĕ
Ăс-хакăл, е йăнăш пухать.
Пур вăл:
Кашнин —
Хăй сехечĕ:
Пĕр тăтăшсăр хăйăр юхать...
Шелсĕр,

Çурма пуш Клепсидра
Вара йăванать кутăнла.
Ирĕк, ейӳллĕ ăс тытрăм
Каллех
Яшă пулнă –
Çынла.
Çирĕп те
Кăрăн хиствевлĕ
Çĕн хĕлĕх –
Янрать, илĕртет.
Вĕçĕмсĕр пурнăç
Ĕçтевлĕн
Пин çуллăхсем витĕр –
Иртет.
Анлăлăх.
Çăлтăр тан тапнă.
Çӳретĕп –
Пĕрме те пĕччен.
Уçлăх –
Ытарлă хĕм сапнă.
Çук вĕçĕ-хĕрри те –
Тĕнчен...

Калаççĕ – вăл халь ĕнтĕ ватă, ун халĕ хыçран хăйăр юхать... Чим-ха, кашниех эпир – çав хатарлă сехетех /Клепсидра тениех/ мар-и вара? Мĕн самантсерен

юхать пирĕн кун-çул хăйăрĕ, кун иртнĕçем ĕмĕр кĕскелет, сехетĕмĕр тикĕс ĕçлейми пулать. Ĕнтĕ ак эсĕ ăслă та, аслă та. Иртейнĕ кун çул куçĕ те тарăн сан... Анчах та самана тухтăрĕ килет те Клепсидрăна кутăнла çавăрать. Çĕнĕрен пуçланă сехет урăх шăпа хăйăрне юхтарать халь теветкеллĕн.

Атăл хĕрринче, хăйăр çинче ĕмĕр çилĕ шăхăрса юрлать, юхан шыв хĕрринче вăл флейта калать.

**1981**

## РОНДО

Кун-çул нуши-хури пулать вăл тĕрлĕ.
Ăна пухатпăр хамăр. Каçлă-ирлĕ.
Килет те ăшă кун — тӳпе сенкер.
Сенкерĕпе пĕрле çӳрет — синкер.
Кун-çул нуши-хури
Умри, хыçри тĕнче... Йăлтах вут хыпнă.
Синкерлĕхе савса... Хастарлăх сыпнă.
Çĕн Çул тупас тесен — хăвнах тинкер.
Пĕр хăвăнта кăна — пиччен-тӳнтер
Кун-çул нуши.
Çав йывăра пин çын килсе пуç тайнă.
Малаш çула вара вут витĕр кайнă.

Хастар ёҫченӗн, ҫук, тухман тинке.
Асапсӑр савӑнӑҫ — суя ёнкер,
Кун-ҫул нуши...

**1999**

* * *

Ёмӗр. Ҫапла чӗнетчӗҫ старике ялта. Вӗттисемшӗн Ёмӗр мучиччӗ вӑл, ҫулланнисем Ёмӗр пичче тесе хисеплетчӗҫ. Чылайӑшӗ вӑл Петӗр ятлине манса та кайнӑччӗ пулмалла. Ҫитмӗл урлӑ каҫнӑскер, кӗлеткипе йӑрӑсчӗ, ҫӑмӑллӑн яртлаттарса утатчӗ. Ҫурхи ҫӗр кӑшт кушнӑ-кушманах хирсене пӑхса ҫаврӑнатчӗ, «акма тухма вӑхӑт ҫитнӗ, ҫӗр пиҫнӗ» тетчӗ вара ялйыша. Кӗр ёҫӗ вӗҫленсен те кураттӑм ӑна хирте, тумне хывнӑ вӑрманта.

— Шӗкӗр турра! — тетчӗ, каска ҫине вырнаҫатчӗ сывлӑш ҫавӑрма. — Кӗр кутӑнне пӑхман чӗр хунав, сӗткен сивӗнмен унра. ... Ёнтӗ халь автансӑр яла та кайма юрать. Кӗрхи тырӑсене акнӑ, сухаламаллине сухаланӑ...

Сар кӗртен пуҫласа ҫула тухрӑм.
Ун кӗрпек-пулӑхне ачаран

Çак кун-çулăн ытарĕ пек пухрăм,
Кĕр хистевĕ сÿнми пулнăран.
Сар кĕртен пуçласа çула тухрăм.
Кĕр çитсен утрăм эп вăрмана.
Вăрмантан пуçласа,
Çĕр пин сухрăм,
Кĕр хистевĕ çÿретрĕ мана.
Кĕр хистевĕ çĕн тивĕçлĕ парăм,
Çĕнĕ йывăрлăх тарĕ сунать.
Сарă кĕр хастарне — кăмăлларăм.
Сĕм вăрман — чун таппиллĕн çунать.
Кĕр хистевĕ!
Репризăллă ахрăм!
Тавăрать вăл мана Ĕнере.
Ĕнерти Ыранпа эп —
Çырлахрăм.
Шухă çил çĕн кĕвве ĕнĕрет.
Шухă çил Ĕнерхин пулассишĕн
Вĕçтерет çулçăсен çилхине.
Сыв пуллашрĕ вăрманăн сĕм йышĕ
Ĕмĕтне кăларса çул çине.
Шухă çил
Пин ачашлăн лăпкарĕ
Ÿкерсе йĕкеле —
Çĕр çине.
Тапхăр-тапхăр —
Вăрман каш! кашларĕ,

Инçете ăсатса таппине.
Эп — Йĕкел.
Сар кĕрпе çула тухрăм.
Чун кĕрпекĕ —
Атте-аннерен.
Тăван çĕр чĕннипе
Çĕр пин çухрăм
Çул çӳретĕп çуллен хивререх.
Сар кĕртен пуçласа çула тухрăм.
Паянхи —
Ёнерхин илпекне
Вут хаваллăн,
Репризăллăн пухрĕ
Туптаса чун-чĕре тĕрекне.

**1987**

* * *

Пит тĕлĕнмелле вашават кăмăллăччĕ вăл, ялта та ăна Салам Çирки тесе чĕнетчĕç. Ахаль те — ваттине курать-и, вĕттине асăрхать-и, тӳрех аллине саламлăн çĕклетчĕ.

— Кил, лартса кайăп, çуран ĕç ӳсĕнмест вăл, — тетчĕ урапа çине вырнаçма йыхăрса.

Чун ăшăнатчĕ вара, кăмăл евĕкленетчĕ.

— Пурнăçĕ ăнса кăна пынă пуль ун, — тейĕр эсир.

Мăн ăнни пултăр? — ăнăçсăр ывăлĕ çине-çине авланчĕ, кил тĕлне пĕлес арçын пулаймарĕ. Арăмĕ çамрăклах айăплă пулчĕ, сусăрланса хĕне кайрĕ...

Çулсерен ытларах ăнланса пыратăп эпĕ çак ваттăн ăшă кăмăлне. Енчен мана паян та тепĕри алă çĕклесе саламлать, чыс тăвать пулсан — пĕлетĕп — унта Салам Çиркин тӳпи те пур...

Сăваплă кĕрсен вут ытарĕ —
Епле вăл килпетлĕ, мăнтарăн, —
Сапать ВĔРЕНЕ çут хĕлхем.
Хĕвеллĕ те йăрăс пултарăм,
Кăварлă та ирĕклĕ ярăм,
Хастарлă,
Хаваслă кӳлем.
Кĕрхи хĕм ытар хĕрнĕçемĕн,
Хывать шухă çил çĕнĕ çемĕ.
Чунра вăрататать вут илем —
ВĔРЕНЕ.
Сар çăлтăрлă varкăш хавалĕ,
Ырми геометри вăй-халĕ,
Яштак тӳр кĕтеслĕх — çулçи...
Кĕç ӳкĕ, çĕрсе вăл сухалĕ.

Упранĕ-ши сыввăн хавалĕ.
Хывмашкăн тата çĕн кĕр çи?
Тивлетлĕ-ши юлĕ?
Тивлетсĕр?
Тăкать илемне перекетсĕр
Çил аркăллă авсăм чĕрçи —
ВĔРЕНЕ.

— — — — — — — — — — — — — — — — — — — — — —

Туять пуль хăйне çĕнтерӳçĕн,
Çулçа тустаруллă çӳрӳçĕн
Лăскать сивĕ çил йывăça.
Ытла та-çке кăмăлĕ йӳçĕ!
Сурать çумăрпа вăл вĕрӳçĕ —
Çухатнăн йăлтах канăça.
Çаралнă.
Шăнса ĕнтĕркенĕ...
Епле ăшăнса вăл вĕренĕ
Кĕтмешкĕн çурхи тухăça —
ВĔРЕНЕ?

**1988**

* * *

Вăй çук, — тетчĕ атте, вилес умĕн пĕр виç уйăх маларах. — Вĕçне тухатăп пулмалла. Ĕнтĕ сире те пурăнма вырăн парас пулать. Пĕр йывăç ӳкнĕшĕн вăрманта хунав пĕтес çук. Шыв та юхма пăрахмĕ,

çил те вĕрме чарăнмĕ...

Çак çыхăнусăр пек сăмахсен пĕлтерĕшне çулсерен туллинрех ăша илсе пыратăп. Дирижерĕ те, сăвăçĕ те, композиторĕ те — ĕмĕр пурăнаймĕç. Çамрăк дирижер килĕ, аллине çĕклĕ те — çĕнтерўллĕ симфони янăраса кайĕ. Шыв юххипе çил чуппине иленекен çамрăк татах та пулĕ — çĕнĕ сăвăсем çуралĕç. Чун ыратăвĕпе хавасĕ те кăмăла хускатмасăр юлмĕç — çĕнĕрен çĕнĕ юрă хайлама хистĕç. Чăнлăх кăна юлĕ ĕмĕре. Тĕрĕсе. Çынсен чунĕнче йăлтăр çуталса кайĕ те вăл сăмахăн урăхла пĕлтерĕшĕ вăранĕ вара.

Юнăма йĕс шăнкăравлăн вĕретнĕн,
Пианино чунне вăратса,
Клавишсем çийĕпе вĕтĕртетнĕн
Пўрнесем, пин асам çуратса,
Сарă çулçă вĕçет.
Хум çўретнĕн,
Тулăх кĕр кĕввине шăратса.
Маншăнах —
Вут-кăварлăн —
Пĕлетĕп,
Кĕмĕл хĕлĕх карать сывлăшра.

Ун кĕвви янăравлăн, тивлетлĕн,
Çут асамлăн тапать ман ăшра.
Хĕм кĕвве кĕрсерен эп итлетĕп,
Ĕмĕте туптаса шанăçра.
Е Шопен, е Чайковский шыравĕ,
Чун таси пек чĕлтревлĕ инçет,
Е Бетховен мăнаçĕн уявĕ —
Вут-кăварлă, хастарлă тĕнче.
Сарă çулçă —
Сар кĕрĕн хăявĕ —
Шăранать шухă çил таппинче.
Кăмăла кĕр шăнкравлăн вĕретрĕ,
шанăçпа ĕмĕте вăратса.
Клавишсем çиййĕпе чĕлтĕртетрĕ
Чун таси.
Çĕн хăват шăратса.
Сарă çулçă вĕçет.
Хум çӳретнĕн.
Яш хаваллă хастар çуратса.
Хама хам çамрăкрах курăнатăп,
Кĕр кĕвви вырнаçать те чуна.
Кĕр килет те —
чунпа вăранатăп.
Яш хаваллăн утап вăрмана.
Сар кĕрпе пуянрах пурăнатăп,
Хавасрах эп кĕтеп —
Ырана.

**1987**

* * *

Çапла вĕт, пурăнан ĕмĕрте пуç ухса çеç утма май тупăнмасть. Ваттисем пирĕнтен уйрăлса кайнине асилетĕп — вара ăшшăн кулам тенĕ çĕртен ирĕксĕрех ассăн сывласа яратăп-и, тен? Ваттисем пире ăса вĕрентнине асилетĕп — вара ассăн сывлас чух ăшшăн кулса та пăхатăп пуль. Утсах утасчĕ, тетĕп-çке пурнăçра — кăмăлăма хуçакан аса илӳпе вăя кĕрсе çитеймен шанăç тава кĕни, пĕр-пĕрне хирĕç тăни ăнсăртран мар пек. Анчах хамра вăраннă сăмахсен тĕшшине тупасси çав-çавах йывăр-ха... Ĕмĕр çавра çилĕ шухăшăма та, чун сисĕмне те чăнпа суя хушшинче синкерлĕн çавăрттарать.

Сар çулçă пин хурталлăн
Савать, мухтать кĕре.
Хăлат пек сумлăн, тавлăн
Вĕçсе анать çĕре.
Ытамĕ унăн аслă —
Тĕнче пек, тупата.
Епле вăрман хавaслă!
Е сад пахчи тата!
Хастар — сар çулçă. Яшă.

Вĕçет карталанса.
Ташлать вăл ирĕк ташă,
Çилпе ыталанса.
Туптать ӳпкелешмесĕр
Çур кунĕн килесне.
Хастарланать, йĕмесĕр,
Пĕлсен те вилесне.
Кĕрхи сада кĕретĕп
Хама тĕрĕслеме.
Çĕн ĕмĕтпе хĕретĕп
Çулталăк ĕçлеме.
Сар çулçă яш çунатлă
Хавал хайланă чух,
Унран таса сăваплăх
Тек маншăн ним те çук.
Хамри хама кĕретĕп
Çуллен çулах пĕрре.
Çуллен пĕрре кĕтетĕп
Сăваплă сар кĕре.
Кĕр çутинче куратăп
Эп уççăнрах хама.
Хамри хама тăнлатăп
Тата çĕн çул хывма.

**1987.**

* * *

Шĕлтĕр-шĕлтĕр туса шурă хут

Тĕттĕмре шур çунатлăн вĕçейрĕ. Сĕмлĕхрен чĕрĕ сыпкăм ĕçейрĕ. Çĕн сămax, Çĕн сăмах шыраса... Шĕлтĕр-шĕлтĕр туса... Ĕнтрĕк саралса çитнĕ пӳлĕмре пĕччĕнех ларатăп: камин ĕнтĕ сӳннĕ, ĕмĕлке театрĕ те «канать-тĕр». Анчах сĕтел çийĕнчи шурă хут, ав, форточкăран кĕрекен вăркăшпа хускала-хускала илет. Вара куç умĕнчех сăмаха хывăнас сасă паллисем чĕвĕлтетсе илеççĕ, страница çийĕн пăлхавлăн кĕмĕл хĕлхем сирпĕтсе вĕçкелеççĕ. Ав: пӳлĕме майĕпен хăюсăр уйăх çути сăрхăна пуçларĕ, ман йĕри-тавралли япаласене чун кĕнĕ пек пулчĕ...

Иртеççĕ ĕмĕрсем.
Кун çийĕн.
Ĕмĕлкелле шуса иртеç.
Курсам: шур пĕлĕт сийĕн-сийĕн...
Кĕрхи куна йĕпхӳн йĕртеç.
Пуласлăхпа Иртнин тĕнчийĕ —
Хĕрхӳ ман кăмăла чĕртеç.
Кунçул ларать иккен тĕпе
Пинçуллăхсен хавасĕпе.
Пинçуллăхра эп — çĕтнĕ пăнчă.
Эп — халĕ пур.
Ытти — харам.

Кун-çулăм ман, тен, пулчĕ хăнчăр,
Сив ĕмĕрсемшĕн вăл — тарам.
Кĕрпе хĕл хушшинче, ак, кăнчăр! —
Килсен чуна пăрлантаран, —
Пулса ăсанăп тĕттĕме
Çурхи куççулĕпе йĕме.
Çур кунĕ килĕ аслатиллĕн
Кĕмсĕртетсе яш çумăрпа.
Каллех çуралĕ илĕм-тилĕм
Хĕвел кĕрешнĕ чух пăрпа.
Тĕнче тăвать сăваплă кĕлĕ,
Сырать çанталăк çĕн сурпан.
Хавассăр ĕмĕлке тек çук,
Кĕç çитĕ шавлă, ирĕк çу.
Орфей калать ытарлă кĕвĕ:
Пепке-папка сикет-ташлать,
Çурхи кунсем хайланă тĕвĕ
Вăрман туллин кĕрлет-кашлать.
Манри хавал тек пулмĕ сивĕ —
Вăрман ăна та тăтăшлать.
Эппин, выртам-и канăçра,
Çĕнни тупан ăмсанăçра.
Иртеççĕ ĕмĕрсем кун çиййĕн.
Ем-ешĕл шавпала
Иртеç...

1990

* * *

Çаран çинчи чечек — кашни пĕрерĕн,
Кĕрхи сар çулçă пайăрне тĕсерĕм.
Пĕрер тумламăн çумăр тăкăнать.
Кăвайт çаппи — кашни хăйле сунать.
Çĕршер расна туратлă пайăр йывăç.
Пĕртен-пĕрех тĕнче хывасшăн сăвăç.
Мĕльюн этем. Кашнин хăйле кун-çул.
Пĕрерĕн пĕрчĕрен ӳсет тыр-пул.
Çӳл тӳпере — пин çăлтăр. Йăлтăр хĕмлĕ.
— Кĕç хыпăп-çăтăп, сӳнĕ! — тет-тĕр сĕмлĕх.
Кĕр тĕттĕмне çĕнтерчĕ ВĔРЕНЕ.
Кăвайт пек сунчĕ. Юлчĕ чĕрене.
Ан тив, хӳри пулсассăн та ун пăрнăç,
Пĕртен-пĕррелĕхпе килпетлĕ пурнăç.
Тапать вăл хăрнă вилĕме çĕнме,
Пин-пин сăпатлă пĕрлĕхе чĕнме.
Пĕррелĕхлĕ пĕрлĕх шав савин пире!
Таппи ăсаннă унăн вĕççĕре.

Вăрмана каям-и ак — юлташ тупăп: чун килениччен юрă юрлама. Ахрăм пулĕ çав юлташ.

Касхи хире тухам-и — çул ертӳçи тупăп: малаш хевти шырама. Уйăх пулĕ çав ертӳç.

Çула тухам-и ирпе — ӳркевĕме сире-

кен вăй тупăп: хыçра тĕкĕ пулма. Çил пулĕ çав вăй.

Çут тĕнчере пĕрме-пĕччен мар эппин эпĕ. Çут тĕнче — манпа. Таппи ăсаннă унăн вĕçсĕре.

**1992.**

## КĔРХИ ОКТАВĂСЕМ

* * *

Тĕттĕм кĕр çул питĕрсе хăратрĕ
Куççульпе йĕрен çулталăка.
Черченке вут чĕлхипе вăратрĕ
Çут кăвайт лăш пулнă талăка.
Вăл манра çул хевтине юратрĕ,
Шарт! хупса, синкерлĕ алăка.
Кăрттăн-кăрттăн хускалать чĕре.
Вĕрене çул кăтартать пире.

* * *

Ĕмĕт хĕлĕхне — кĕр çилĕ — татрĕ.
Çĕтересшĕн тытрĕ чӳлĕкрен,
Утсене амак çĕре ăсатрĕ,

Ир — хăпаймĕ, тенĕн, тĕлĕкрен...
ВĔРЕНЕ çулçи çула çутатрĕ
Çут ире тухмашкăн сĕмлĕхрен.
Вăрман витĕр тухăпăр-ха, ак.
Килес кун сунать пире артак.

* * *

Ах, тата мĕскер-ши ĕнтĕ шырăп?!
Пĕр килни каях тăрать инçе...
Килес кун çитсессĕн... Эп те ырăп,
Выртăп юр виттийĕ айĕнче.
Ывăлсем суйлана — ырă вырăн.
ВĔРЕНЕ çĕкленĕ ман çинче.
Вăрман витĕр тухрăмăр пулсан, —
Ĕнтĕ ĕмĕтӳ çитейнĕ сан.

**1993**

## МĂШĂР РУБАИСЕМ

* * *

Этемĕн пурнăçĕ — пĕртен-пĕрре.
Хăш чух тӳнтер те çаврăнать тӳрре.
Вăл пулас мар — мĕн пурăнни те кăлăх.
Кĕрех, кун-çул, ĕмĕтпеле чĕрре.

Курсам: хĕвел хастарланать хавассăн.
Çавна курмасăр эс сывлатăн ассăн:
Мĕне пĕлтерчĕ турă кун пани
Енчен кунтан каятпăрах пулсассăн?

Турра та çăмăл мар пире савма,
Кашни этемшĕн пилĕкне авма.
Вара ăна пĕр уншăн айăплас-им?
Эпир килетпĕр Ун патне кайма.
Хăв шăпуна хайланă евĕр юрă
Яш тăхăмсемшĕн пултăр пиллĕ, ырă.
Унран ытла тек ним те кирлĕ мар,
Çĕн пурнăç уйĕ — хĕл питти. Шап-шурă.

## РОНДО

Кам çыракан — кашни ахах тупаймĕ.
Кам шыракан — кашни поэт пулаймĕ.
Поэт тени сайра шăтса ӳсет.
Хăш шыракан харам асап тӳсет.
Эппин вăл — йăнăш çулпала утайнă.

Миçе çĕр çуллăх шавлăн иртнĕ-кайнă.
Тĕнче пин вăрттăн çăмхине сӳтет.
Пурах-ши чăн ахах?

Шанать. Кĕтет
Кам шыракан.

Кам пурнакан — пĕрех сăмах калайнă.
Ан тив, вăл виç çынра кăна юлайнă,
Пĕрех туяннă çав этем — тивлет.
Курайманни — çут тĕнчене сивлет.
Явап-сăваплă сăмахне калайнă
Кам шыракан.

**1992**

# Георгий Федорован палларах кёнекисем

1. Хальхи чаваш литератури: Илемле асталах ыйтавесем. Ш., 1990. /Ю.В.Яковлевпа перле/.
2. Художественный мир Федора Уяра. Чебоксары, 1991.
3. Ю.Скворцов: Статьясен пуххи. Ш.;1972 /Ю.В.Яковлевпа перле./
4. Чувашская литература: Вопросы истории и теории. Чебоксары, 1992, /Ю.В. Яковлевпа перле./
5. Чаваш литературин санарла пуплев теорийе. Ш., 1994.
6. Санарла самах шыраве. Ш., 1996.
7. Художественный мир Чувашской прозы 1950-1990-х годов. Чебоксары, 1996.

